Çамрăксен «Королевская ночь» уявĕнчен

# Савăнчĕ яш-кĕрĕм уявра


Район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов уяв ячĕпе саламлать.


Универмаг умĕнчи тĕп площадьре халăх лăк тулли.


11 мăшăр уяв королĕпе королеви пулассишĕн ăмăртрĕ.


«Балл королĕ» тата «Балл королеви» – Муркаш шкулĕнчен вĕренсе тухнă Сергей Николаевпа Кристина Дмитриева.


Валентина Егорова уява хăйĕн амăшĕпе тата мăшăрĕпе килнĕ.


Боксерсен кăтартуллă кĕрешĕвĕ.

Иртнĕ вырсарни кун, июнĕн 24-мĕшĕнче, эпир хамăр Республика кунне чаплăн паллă турăмăр. Июнĕн 27-мĕшĕ вара – Раççей çамрăкĕсен кунĕ. Çав ятпа иртнĕ юн кун район центрĕнчи тĕп площадьре çамрăксен «Королевская ночь» уявне ирттерчĕç. Тӳрех каламалла, программа та пуян, тулли кăмăлпа савăнса канма та майсем çителĕклех пулчĕç.

Уяв каçхи 8 сехетре «Ăраскал» эстрада ушкăнĕ хăйĕн пултарулăхĕпе паллаштарнипе пуçланчĕ. Чылай савăк юрă-ташă парнелерĕ вăл пухăннисене. Чылайăшĕ çамрăксенчен чăтса тăма мехел çитереймерĕ, хавас кĕвĕ çеммипе ташлама пикенчĕ. Ара, уявра çапла пулмалла та. Çамрăксем кунта вĕт-ха ытларах, вĕсем валли йĕркеленĕ ку уява. Кичем пулма сăлтав çук.

Ачасен искусствин Муркашри шкулĕн ташă ушкăнĕ те пултарулăхпа палăрать. Хăйсен ăсталăхне сцена çинче пур енлĕн сăнласа пама тăрăшрĕç вĕсем. Кашни номерех пухăннисем тăвăллăн алă çупса йышăнчĕç.

Кайран вара сцена çинче çамрăксен прическисене кăтартрĕç. Прическăсене уяв валли «Шарм» (Терентьев предприниматель) тата «Прелесть» (Кадыкова предприниматель) салонсем уяв валли ятарласа хатĕрленĕ.

Уява савăнăçлă лару-тăрура район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов уçрĕ. Кунта малтанах çакна та асăнса хăвармалла. Çамрăксен уявне, вĕсене уяв ячĕпе саламлама, вĕсемпе пĕрле савăнма пирĕн мухтавлă ентеш, Муркаш ятне, чăваш ятне тĕнче шайне çĕклеме пултарнă çын, Олимп вăййисен чемпионки пулнă Валентина Егорова та килсе çитнĕ. Унпа пĕрлех унăн амăшĕпе мăшăрĕ те. Уява уçнă май вара Юрий Александрович пухăннисене, шкулсенчен вĕренсе тухнисене Çамрăксен кунĕ ячĕпе саламланипе пĕрлех малашлăх вĕсен аллинче пулнине палăртрĕ. Малашнехи пурнăçа йĕркелесе пырасси вĕсен хулпуççийĕ çине тиенет. Апла пулсан çине тăрса вĕренес, çанă тавăрса ĕçлес пулать. Çавăн чухне çеç пурнăç илĕртӳллĕрех те усăмлăрах пулĕ.

– Сирĕн, çамрăксен, акă камран тĕслĕх илмелле,– терĕ вăл Валентина Егорова енне çаврăнса.– Сирĕнтен мĕнпе уйрăлса тăрать-ха вăл? Нимĕнпе те. Хăй çине тăнипе, вăйхалне шелленменнипе, малаллах ăнтăлнипе çакăн пек пысăк çитĕнӳсем тума пултарнă. Çакна валли сирĕн те çул уçă.

Уява пухăннисене çавăн пекех Валентина Михайловна Егорова хăй те, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, «Единая Россия» фракци членĕ В.Г. Данилов та, Чуманкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Л.Г. Ковалева та саламларĕç, вĕсен ячĕпе чи ăшă сăмахсем каларĕç.

Унтан уйрăмах савăнăçлă самант пуçланчĕ. Район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов тата В.М. Егорова Чăваш Республикин Президенчĕн стипендийĕсене тивĕçнисене свидетельствăсем, пултаруллă çамрăк специалистсене район администрацийĕн Хисеп грамотисемпе парнесем, Тав çырăвĕсем пачĕç, кăçал шкултан ылтăн тата кĕмĕл медальсемпе вĕренсе тухакансемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕсене чысларĕç. Валентина Егорована вара чăваш пикин тумне тăхăнтартрĕç.

Муркашри Спорт çурчĕн физкультурăпа спорт инструкторĕ Н.В. Иванова тата Чуманкасси шкулĕн физкультура учителĕ С.Н. Романов вара Чăваш Республикин Физкультурăпа спорт министерствин Хисеп грамотисене тивĕçрĕç.

«Çамрăксен чи лайăх наставникĕ» конкурсра «Хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕ» хупă акционер обществин директорĕн снабжени енĕпе ĕçлекен çумĕ пулса тăрăшакан А.В. Игнатьев мала тухнă. Вăл та парнесĕр юлмарĕ. Вăл тата Муркаш райповĕнчи çамрăксен канашĕн ертӳçи П.А. Бирюков яш-кĕрĕме уяв ячĕпе саламласа малашнехи пурнăçра ăнăçусем сунчĕç.

Предприятисемпе организацисенче çамрăксемпе ĕçлессине епле йĕркеленине палăртма çулленех республикăра çамрăксен канашĕсем хушшинче конкурс йĕркелеççĕ. Иртнĕ çул итогĕсемпе тĕрлĕ номинацисенче районти тĕп больницăри, Муркаш райповĕнчи, «Хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕ» хупă акционер обществинчи çамрăксен канашĕсем çĕнтерӳçĕсем пулса тăнă.

Уява килнисене çамрăксен Шупашкартан килнĕ «Апельсиновые мальчики» эстрада ушкăнĕ юрă-кĕвĕ чылай парнелерĕ. Уяв вĕçленичченех хавас кĕвĕпе Универмаг умĕнчи тĕп площадьре ташлама май килчĕ.

Кунпа пĕрлех армспорт енĕпе, шашкăлла тата шахматла выляссипе, кире пуканĕ çĕклессипе спорт ăмăртăвĕсем иртрĕç. Уяв итогĕсене пĕтĕмлетнĕ май çĕнтерӳçĕсем парнесене тивĕçрĕç.

Суту-илӳ предприятийĕсем хăйсен продукцине сĕнчĕç. Техĕмлĕ шашлыкне те, ытти апат-çимĕç продукчĕсене те çиме-тутанма майсем туса панă.

Площадьрех «2007 çул – Ача çулталăкĕ» фотовыставка йĕркеленĕ. Унпа паллашакансем те сахал мар пулчĕç.

Халĕ вара уяв ячĕ патне таврăнар. «Королевская ночь» ятлă вăл. Апла пулсан епле уяв-ха вăл корольпе королевăсăр? «Король бала» тата «Королева бала» ятсене тивĕçессишĕн кăçал районти вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнă 11 мăшăр ăмăртрĕ. 3 мăшăр Юнкă шкулĕнчен, 1-шер мăшăр Нискассинчен, Чуманкассинчен, Турайран, 2-шер мăшăр Ильинкăран, Муркашран тата 1 мăшăр Нискассипе Юнкă шкулĕсенчен пĕрле. Çĕнтерӳçĕсене кĕсье телефонĕсемпе SMS-пĕлтерӳсем ярса палăртмалла пулчĕ. SMS-пĕлтерӳсене пĕтĕмлетнĕ хыççăн вара Муркаш шкулĕнчен вĕренсе тухнă Сергей Николаевпа Кристина Дмитриева «Король бала» тата «Королева бала» ятсене тивĕçни палăрчĕ.

Çур çĕрте уяв вĕçленнине пĕлтерсе фейерверк тĕттĕм тӳпене çутатрĕ. Хавас кăмăлпа саланчĕç уява пухăннисем.

**В. ШАПОШНИКОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Ĕçпе ырă ята тивĕçнисем

## Ялти пĕрремĕш библиотекарь

Çак кунсенче Библиотека кунне уявланă май Мăн Шашкар ял клубĕн ертӳçи Ильинка ял тăрăхне кĕрекен Вăрманкасси шкулĕнче вĕренекен ачасемпе пĕрле пуçтарăнса Мăн Шашкар ялĕнчи библиотекăра ĕçленĕ 1-мĕш библиотекарь Любовь Ильинична Князева патне çул тытрĕç.

Любовь Ильинична тивĕçлĕ канура, чире пула килтен тухса çӳреймест, çавăнпа та çак професси кунĕ ячĕпе саламлама пыни ватă çынна питĕ савăнтарчĕ.

Любовь Ильинична 1922 çулхи чӳк уйăхĕнче Етĕрне районĕнче çуралса ӳснĕ. 1956 çулхи çурла уйăхĕн 3-мĕшĕнчен пуçласа Шашкар ялĕн вулав çуртĕнче ĕçлеме тытăнать. 1957 çулхи нарăс уйăхĕнче вулав çуртĕнчен ял библиотекине уçнă. Çак çулах Çĕрпӳ хулинчи библиотека техникумне вĕренме кĕрет. 1959 çулта библиотекарь курсне пĕтерет. Çак çултан пуçласа мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччен, ун хыççăн та, 1981 çулччен, пĕр канăва пĕлмесĕр, пĕтĕм чун-чĕрине парса хăйне килĕшекен ĕçĕнче тимлет. Кĕнекесене 3 пин ытла Тури Олкашран илсе килнĕ, пин ытла брошюрка пулнă, бибколлектора кĕнекесем суйласа илме хăй çӳренĕ. Куçса çӳрекен библиотека пуçарса янă. Мăн Шашкар библиотекинче çирĕп кĕнекесен шутĕнче 12 пине яхăн пулнă. Комсомол, пионер организацийĕсен кунĕсене, уявсене час-часах хутшăннă, колхоз пухăвĕсенче тухса каласнă. Ялан, пĕр вĕçĕм халăх хушшинче, халăхпа пĕрле пулма тăрăшнă.

Ял халăхĕ колхоз ĕçĕнче вăй хунă вăхăтра Любовь Иьинична ĕç çыннисем патне кайса кăмăла кайнă кĕнекесемпе тивĕçтернĕ тата кам мĕнле кĕнекепе интересленнине ыйтса пĕлсе тепĕр куна валли тупса хатĕрленĕ.

Шашкар тăрăхĕнчи пĕтĕм ял халăхне кĕнекесемпе тивĕçтернĕ. Ялсем тăрăх спектакльсемпе çӳренĕ. Уйрăмах “Тихий Дон”, “Сталинградская битва” кĕнекесем алăран алла çӳренĕ. Халăх питĕ кĕнеке вулама юратнă.

“Хамăр ĕçе кăтартас тесен халăхпа пĕрле пулмалла”, – тет хисеплĕ библиотекарь. Кăмăллă ĕç çынни çавăн пек тунă та ĕнтĕ. Вăл парти организацийĕн ертӳçин çумĕ, халăх контролĕн комитечĕн ертӳçинче вăй хурса ĕçленĕ, пĕр вĕçĕм халăх хушшинче, халăхпа пĕрле.

Любовь Ильинична Князева парнесемпе наградăсене те тивĕçнĕ. Вĕсен шутĕнче “Вăрçă ветеранĕ”, “1941-1945 çулсенчи Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенчи хастар ĕçшĕн”, Аслă Отечественнăй вăрçăра Çĕнтерӳ тунăранпа 50 çул тата 60 çул çитнĕ юбилей медалĕсем.

Çавна та каласа хăварас килет. Любовь Ильинична халĕ те хаçат-журналпа, кĕнекесемпе туслă. Тĕрлĕрен хаçат-журналсем çырăнса илет.

Хисеплĕ çынна Библиотека кунĕ ячĕпе саламласа ырă сывлăх, ăшă кăмăл-туйăм сунас килет. Ачисемпе, мăнукĕсемпе, мăнукĕсен ачисемпе куç тулли савăнса малашне те пурăнмалла пултăрччĕ сирĕн, хисеплĕрен те хисеплĕ Любовь Ильинична.

**И. ТАЙМАСКИНА,**
**Мăн Шашкар ял клубĕн ертӳçи.**

Ялсенчен хыпарлаççĕ

## Тав сăмахĕ калатпăр

Муркаш тăрăхĕнче садиксем нумай. Вĕсен шутĕнче пирĕн “Малыш” садик та шутланать. Çак садик уçăлнăранпа 20 çул çитрĕ. Кунта ĕçлекенсем те чылай вăхăт вăй хураççĕ. Акă, тĕслĕхрен, Маргарита Валерьяновна çак садик уçăлнăранпах кунта вăй хурать. Вăл ертсе пынипе садик çултан-çул çĕкленсех, хăватлансах пырать. Маргарита Валерьяновна çак ĕçе юратса пурнăçлать, тĕрлĕрен конкурссене, уявсене ачасене явăçтарсах пырать. Тăрăшулăхне кура кăçал вăл кăкăр çине çакмалли значока та тивĕçрĕ.

Пирĕн садикре пурте аслă пĕлӳ илнĕ воспитательсем ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсен ĕçне юратса пурнăçласа пыраççĕ. Çавăнпа та пирĕн вĕсене тав сăмахĕ калас килет. Малашне те лайăх ĕçлеме сĕнес килет.

Çавăн пекех пирĕн уйрăммăнах Надежда Валерьяновнана та ырă енĕпе асăнса хăварас килет. Вăл пысăк опытлă воспитатель. Пирĕн ачасене тирпейлĕ пулма, ашшĕ-амăшĕсене хисеплеме, тантăшĕсемпе туслă пулма, çут çанталăка юратма тата упрама вĕрентет. Ачасем ăна юратаççĕ, яланах ун çумĕнче пулма тăрăшаççĕ. Çавăнпа та пирĕн ăна та ĕçре ăнăçусем сунас килет. Юлашкинчен сăмахăма Игорь Майков çырнă сăвăпа вĕçлес килет.

Ыррине çеç вĕрентетĕр
Садикре ачасене.
Кашни кун кĕтсе илетĕр
Йăл кулса çеç вĕсене.
Ĕçĕр сирĕн пархатарлă,
Вăй хуратăр тăрăшса.
Сывлăхлă, телейлĕ пулăр,
Пӳлĕх пытăр пулăшса.
Пуç таятпăр, тав тăватпăр
Кăмăлтан сире пурне.
Вăрăм ĕмĕр те сунатпăр
Çакă çутă тĕнчере!

**АШШĔ-АМĂШĔСЕМ.**